чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

17/26423/№ Кĕçнерни кун, 2014, кăрлач (январь), 30 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru


## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 9-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн федерацин "С.Н.Федоров академик ячĕллĕ "Куç микрохирургийĕ" отрасльсен хушшинчи ăслăлăхпа техника комплексĕ" патшалăх бюджет учрежденийĕн Шупашкарти филиалĕн директорĕн çумне **Ирина Леонидовна КУЛИКОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ВРАЧĔ"** хисеплĕ ят;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи муниципалитетăн "Районти тавра пĕлӳ музейĕ" бюджет культура учрежденийĕн директорне **Лидия Владимировна МИЗГИРЕВĂНА,** Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ял тăрăхĕнчи муниципалитетăн "Шуршăлти информаципе культура центрĕ" бюджет культура учрежденийĕн Кайри Шĕнерпуç ял клубĕн методистне **Эльвира Анатольевна НИКОЛАЕВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар районĕнчи "Тракторсен тата строительствăпа çул-йĕр машинисен Атăлçи центрĕ" акционерсен хупă обществин тĕп инженерне **Борис Иванович СИДЯКИНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин "Çĕнĕ Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр" хысна учрежденийĕн директорĕн çумне **Лира Михайловна ДАНИЛОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН СОЦИАЛЛĂ ХӲТЛĔХĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

халăхăн йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тытăмри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Элĕк районĕнчи "Элĕкри коопзаготпром" тулли мар яваплă обществăн кладовщикне **Зоя Алексеевна НИКИФОРОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХĂН ЙĂЛА ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕС ĔÇĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

физкультурăпа спорт енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Çĕнĕ Шупашкар хулинчи муниципалитетăн А.И.Андрианов ячĕллĕ ачасене хушма пĕлӳ паракан "Ачасемпе çамрăксен пултарулăхне аталантаракан центр" бюджет вĕренӳ учрежденийĕн хушма пĕлӳ паракан педагогне **Валерий Федорович БЛАГОЧИННОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ФИЗКУЛЬТУРĂПА СПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

## Влаç органĕсен ыйтăвĕсемпе

***Федерацин Чăваш Республикинчи тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров федерацин территори тата Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Кун йĕркинче – Раççей Федерацийĕн Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич ялан тĕрĕслевре тытакан ыйтусем. Вĕсем – вырăнти ĕç тăвакан влаç органĕсем территорири ĕçтешсемпе тачă çыхăнса ĕçлесси. Пĕлтĕр ведомствăсен хушшинчи çыхăнăва йĕркелес тата координацилес, тĕрĕслесе тата сăнаса тăрас ĕç, гражданесене хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнас, саккунлăхпа йĕркелĕх, социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн тата информаци уçлăхĕн ыйтăвĕсемпе 11 лару ирттернĕ. «Халăх влаç тытăмĕсене ытларах шанма тытăнни – лайăх палăрăм. Çынсен çырăвĕсен тата йышăнăва килнисен шучĕпе эпир округра улттăмĕш вырăн йышăнатпăр, вĕсем хускатакан ыйтусене татса парассипе – виççĕмĕш. Ку – ырă кăтарту, – тенĕ ларура тĕп инспектор. – Çавăнпа пĕрлех кăçал пирĕн Владимир Путинăн 2013 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче Федераци Пухăвне янă çырăвĕнчи пуçарусене пурнăçа кĕртес енĕпе тăрăшса ĕçлемелле».

Сăмах çавăн пекех Раççей Президенчĕн çу уйăхĕнчи указĕсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен те пулнă. Пĕтĕмлетӳре регион влаçĕсем ку енĕпе хăйсен тивĕçĕсене чыслăн пурнăçланине палăртнă. Республика округри общество пĕлтерĕшлĕ проектсене пурнăçлас тĕлĕшпе пуçаруллă ĕçлет. Чăваш Ен кăçал 10 проектран 8-шне хутшăнать.

Канашлура инфекци чирĕсене анлă сарăлма парас мар тесе профилактика мероприятийĕ ытларах ирттерме, çакăншăн яваплă çынсенчен çирĕпрех ыйтма йышăннă.

■ **А.СТЕПНОВ**

*Пĕтĕмлетӳ*

# Патăрьелсен сатурлăхĕ чакман



***Ёнер республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патăрьел районĕнче пулчĕ. Малтанах çĕр улми çитĕнтерессипе паха опыт пухнă «Батыревский» акционерсен хупă обществин ĕç-хĕлĕпе паллашрĕ.***

Вăл – республикăри малта пыракан хуçалăхсенчен пĕри. Унăн производство кăтартăвĕ курăмлă. Иртнĕ çул çанталăк шăрăх тăчĕ пулин те кашни гектартан тырă – 25,9, çĕр улми 274 центнер пухса кĕртнĕ. Предприяти вăтамран 80 çынна ĕç вырăнĕпе тивĕçтерет. Мăйракаллă шултра выльăх – 600 яхăн, çав шутра сăваканни 280 пуç. Иртнĕ çул кашни ĕнерен вăтамран 5406 кг сĕт сунă.

Общество ертӳçи Петр Ялуков республика Пуçлăхне пахча çимĕç, тыр-пул управĕн хуçалăхне кăтартрĕ. «Пирĕн 7 хранилище, – терĕ вăл. – Кунта 1080 тонна çĕр улми вăрлăхĕ ăнăçлă хĕл каçать. Управлăхри сывлăш температурине пĕр пек тытса тăратпăр».

М.Игнатьев Патăрьелти культура центрĕнче канашлу ирттерчĕ. Унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, медицина, вĕренӳ, культура, ял хуçалăх, промышленноç предприятийĕсен ĕçченĕсем хутшăнчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Глухов хăйĕн докладĕнче социаллă пурнăçпа экономикăн 2013 çулхи аталанăвне тишкерчĕ, районăн кăçалхи тĕллевĕсене палăртрĕ.

«Бюджетăн тупăшсен пайĕ пĕлтĕр виçĕм çулхинчен 17,9% пуянрах пулнă, – терĕ вăл. – Налук ытларах пухнă. Пурăнмалли çурт-йĕр нумайрах тунă. Вунă ял тăрăхĕнчи çĕнĕ 18 урама çутă кĕртнĕ. Мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсем кредит илесси çуллен ӳссе пырать. «Земство тухтăрĕ» программа ăнăçлă пурнăçланать: районта 31 врач ĕçлеме тытăнчĕ. Çавна май тухтăрсен шучĕ 10% хушăнчĕ. Вĕсен уйăхри ĕç укçи 25295 тенкĕпе танлашрĕ».

Район пуçлăхĕ ытларах лайăххине каларĕ. Çапах та хăш-пĕр çитменлĕх çинче те чарăнса тăчĕ. Тĕслĕхрен: районти ял хуçалăх, вăрман ĕçченĕсен кăрлач-чӳкра уйăхри вăтам ĕç укçи 9184 тенкĕпе кăна танлашнă. Ку – республикăри АПКра, вăрман тата сунар хуçалăхĕнче вăй хуракансен вăтам кăтартăвĕнчен 13,6% пĕчĕкрех. Çакна мĕнле ăнлантармалла-ха? Ăна ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Светлана Енилина уçăмлатрĕ. «Район организацийĕсенче ĕçлекенсен ĕç укçи республикăн вăтам кăтартăвĕнчен 30,7% пĕчĕкрех курăнать, – терĕ вăл. – Ку чăнлăхпа килĕшсе тăманни куç кĕрет. Çынсене шалу хут çине çырнинчен чылай ытларах параççĕ. Апла пулин те мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине тĕрĕс кăтартмаççĕ. Çапла вара шалуран уйрăм çынран тытакан налук та сахалрах пуçтарăнать. Ĕçлекене аван тӳлемесен республикăра пин çын пуçне груз турттаракан автомашина туянас енĕпе – пĕрремĕш, çăмăл автомашина сутăн илессипе тăваттăмĕш вырăн йышăнаймастăр ĕнтĕ».

Республика Пуçлăхĕ районăн демографи лару-тăрăвĕ лайăхланнине палăртрĕ. Вун пĕр уйăхра кашни 1000 çын пуçне 15,1 ача /республикăра – 14/ çуралнă. Районта пурăнакансем кашни 1000 çын пуçне 2012 çулта – +0,6, 2013 çулта +1,3 /республикăра – +0,8/ хушăннă. 83 мăшăр çемйи салannă. Ку хисеп те республикăн вăтам кăтартăвĕнчен пĕчĕкрех.

Районта сĕт суса илесси виçĕм çулхинчен 0,4% чакнă, мăйракаллă шултра выльăх кĕтĕвĕ – 5,1%. «Сутлăх сĕт хакĕ чылай хăпарчĕ, – терĕ Н.Глухов. – Мĕн пур харпăрлăхлă хуçалăхсен ĕне усрас туртăмĕ каллех вăйланчĕ. Выльăх шутне ӳстерес тĕллевпе çĕнĕ фермăсем тума тĕллевленетпĕр».

Хальхи вăхăтра районта сĕт пухакансем кашни килограма 20-21 тенкĕлле туянаççĕ. Ку хак пирки республика Пуçлăхĕ: «Мĕншĕн йӳнĕлле парса яратăр, – терĕ. – Паян сутлăх хак 25 тенкĕрен кая пулмалла мар».

М.Игнатьева муниципалитет йĕркеленĕвĕн куçман пурлăхĕпе усă куракансем аренда тӳлевне мĕншĕн вăхăтра куçарманни, район больницин стационарĕнче сипленекенсене çитерекен апат пахалăхĕ кăсăклантарчĕ. Район çут çанталăк газĕшĕн парăмлă. Унпа вăхăтра татăлмасан вăл е ку пурăнмалли çурта газ парса тăма пăрахас хăрушлăх пур. Республика Пуçлăхĕ 2,5 млн тенкĕ парăма çывăх вăхăтра пĕтерме ыйтрĕ.

ЧР экономика министрĕ Владимир Аврелькин районти пĕчĕк тата вăтам 71 предприятире пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк укçа виçинчен сахалрах ĕç укçи панине пĕлтерчĕ. Ку тĕслĕх те бизнесменсем чăн-чăн шалу мĕн чухлĕ пулнине пытарни мар-и? Çавнашкал предприятисенчен «Мастерок», «Уют», «Агролес» обществăсене те асăнчĕ. Патăрьелти «Светлана», Первомайски ялĕнчи «Мечта» лавккасенче саккуна пăсса сутнă эрех тупнă. Аптекăсенче медицина спирчĕпе эмел хутăшне /«фанфурик»/ виçесĕр нумай сутни пирки те сăмах пулчĕ.

ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ – Экономика политикин, агропромышленноç комплексĕн тата экологи комитечĕн председателĕ Олег Мешков район республикăн экономика ăмăртăвĕнче малти вырăна йышăннине, çапах та ĕçре хăш-пĕр çитменлĕх пуррине палăртрĕ. «Патăрьелсем – хастар та ĕçчен, вăй хурсан кирек мĕнле чăрмава та пĕтереççĕ», – терĕ.

Республика Пуçлăхĕ канашлăва пĕтĕмлетсе районăн 2013 çулхи аталанăвне лайăх хак пачĕ, кăçал пысăкрах çитĕнӳ тума ыра сунчĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### «Йĕлтĕр йĕрĕ» старт илет

***Вырсарни кун нарăсăн 2-мĕшĕнче Чăваш Енре «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăрту старт илет. Çĕр-шыври чи пĕлтерĕшлĕ спорт мероприятийĕ пирĕн республикăра 10-мĕш хут иртĕ.***

ЧР Физкультурăпа спорт министерстви пĕлтернĕ тăрăх – пĕлтĕр Чăваш Енри чупăва 48 пин çын хутшăннă, тĕп хулари «Шупашкар: 500 çул» паркри тĕп старта 12 пин йĕлтĕрçĕ тухнă. Юлашки вăхăтра Пĕтĕм Раççейри спорт уявне миллион ытла çын хутшăнать. Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраçа спортпа туслаштарас тата сывă пурнăç йĕркине тытса пыма хăнăхтарас тĕллевпе йĕркелекен йăлана кĕнĕ «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» чупу кашни район-хулара иртĕ. Ăмăртура яланхи пекех предприяти-организаци, влаç органĕсемпе ведомствăсен ертӳçисем VIP-чупăва тухĕç, 20 çултан кĕçĕнрех яшсемпе хĕрсем – 5, арçынсемпе хĕрарăмсем 10 км ăмăртĕç. Профессионалсемпе спорта юратакансем, ветерансемпе ачасем те уйрăм ушкăнра тупăшĕç.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Культура вучахĕ хĕмлентĕр

***Культура çулталăкне халалласа Элĕкри тĕп библиотекăра «Культура вучахĕ хĕмлентĕр ялан» кĕнеке куравĕ уçăлнă.***

Раççей культури тĕрлĕ енлĕ те пуян. Акă И.Кондаковăн, Д.Лихачевăн, Ю.Лотманăн тата ытти паллă ăсчахăн ĕçĕсем вырăс культурин кун-çулĕпе туллин паллаштараççĕ. Уйрăмах Ю.Рябцевăн пирĕн çĕр-шыв культурин пин çул каяллахи аталанăвне сăнлакан кĕнеке вулакансемшĕн кăсăклă.

Тăван ен культури çинчен «Развитие культуры Чувашии», «Чувашия: история и культура», «Мир чувашской культуры», «Культура чувашского края» кăларăмсенче тĕплĕн çырса кăтартнă, çавăн пекех В.Сбоев, А.Ефимов, Н.Муратов, Д.Мадуров кĕнекисенче чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе, уявĕсемпе, ал ăсталăхĕпе, ӳнерĕпе паллашма май пур. «Чăваш Республикин Президенчĕн библиотеки» ярăмпа кун çути курнă кăларăмсем те пурин кăмăлне тивĕçтерĕç.

**О.МАСЛОВ.**

### "01" вырăнне – "101"...

***Кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа васкавлă службăсене "101", "102", "103" тата "104" номерсемпе шăнкăравламалла. Çак улшăнусем РФ Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин хушăвĕпе килĕшӳллĕн пурнăçа кĕреççĕ.***

Виçĕ цифрăллă номерсем çине тапхăрăн-тапхăрăн куçма палăртнă. Малашне эпир пурте лайăх пĕлекен номерсем çумне малтан 1 хушмалла. Тĕслĕхрен: пушар службине тата МЧС органĕсене шăнкăравлас тесен "101" пусмалла, полицие чĕнмешкĕн – "102", васкавлă медицина пулăшăвĕ кирлĕ чухне – "103", авари газ службине – "104". Пĕрлехи çăлав службин номерĕ малтанхи пекех юлать: "112". Çак номерпе стационар тата карас телефонĕсенчен те шăнкăравлама юрать.

Çĕнĕ тытăм çине хăçан куçасси карас çыхăнăвĕн операторĕсем техника тĕлĕшĕнчен хатĕрленсе çитнинчен килет. Ку ĕçе вĕçличчен малтанхи "01, "02", "03", "04" номерсене те пăрахăçламаççĕ.

**И.БЕЛОВА.**

### «Фитнес-аэробика – пĕчĕккисем валли»

***Çак ятпа Шупашкарти 108-мĕш «Юмах» ача садĕнче проект пурнăçланать. Музыкăпа ритмика занятийĕсенче хĕр ачасем ташлама вĕренеççĕ тата аэробика уйрăмлăхĕсене ăша хываççĕ.***

ЧР фитнес-аэробика федерацийĕ (президенчĕ – Оксана Вербина) пулăшнипе пурнăçланакан проекта ача садĕнчи физкультура инструкторĕ К.Сергеева ертсе пырать. Нумаях пулмасть пĕчĕк пикесем хулара иртнĕ спорт уявĕнче хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарнă. Аэробикăра пуçламăш утăм тăвакан çамрăк спортсменсене йĕркелӳçĕсем тĕрлĕ парнепе хавхалантарнă. Вĕсен вĕрентекенне, «Профи-аэробика» номинацире палăрнăскере, Хисеп хучĕпе тата медальпе чысланă. Кăшт ăсталăх пухнă хыççăн çитес çул маттур ачасем ăмăртусене хутшăнас тĕллевлĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Мандаринпа кăна çырлахман

***Шупашкарти павильонсенчен пĕрне каçа хирĕç çамрăк çын кĕнĕ. Мандарин туяннă. Анчах тухса кайма васкаман...***

Сутуçă тепĕр çынна таварпа тивĕçтернĕ май ун çине пăхса тăман çав ĕнтĕ. Çак самантпа усă курса йĕкĕт сĕтел урлă кармашса сутуçă саппунĕн кĕсйинчен укçа хутаçне кăларса илнĕ. Унта вара кунĕпе тавар сутса пухăннă 15 пин тенкĕ пулнă.

Çамрăк çын тулалла васканă. Сутуçă – ун хыççăн. Çăмăл машина патне пырса тăнă йĕкĕте укçана тавăрса пама хушнă. Лешĕ аптраса ӳкмен, хĕрарăм еннелле утнă. Сутуçă, паллах, шикленнĕ, лавккана тарса кĕнĕ, унтан полицие шăнкăравланă. Вăрă йĕркелĕх хуралçисем килессе кĕтсе тăман, машинине хăварсах тарнă. Пакунлисем автомобиль патĕнче засада та йĕркеленĕ – çук, йĕкĕте кĕтсе илеймен.

ВАЗ хуçине темиçе кунран килĕнче тытса чарнă. Шупашкар районĕнчи ял çамрăкĕ иккен. Шар курнă сутуçă ăна палласа илнĕ. Вăрланă укçана та тупнă. Чăн та, пĕтĕмпех мар, 10 пин тенкĕ çеç юлнă, ыттине йĕкĕт тăкаклама ĕлкĕрнĕ.

**К.АНТОНОВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 22, каçхине 22 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 775 мм, сывлăшри нӳрĕк 65 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 28 минут.**

## ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ÇĔРĔН ХУÇИ ПУЛМАЛЛАХ



**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăри АПК ĕçченĕсемпе анчахрах ирттернĕ тĕл пулура ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов каланă сăмах шухăша ячĕ. «Эпĕ те, республика Пуçлăхĕ те – аграрниксем, анчах ял хуçалăхĕн пĕлтĕрхи пĕтĕмлетĕвĕ япăх, кăтартусем каялла туртаççĕ», – терĕ Юрий Алексеевич.**

**Халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕпе танлаштарсан уй-хир ĕçĕ çанталăк условийĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Вăраха кайнă йĕпе-сапана пула иртнĕ кĕр çĕр улми нумай юлчĕ. Апла пулин те чылай хуçалăх «иккĕмĕш çăкăра» вăхăтра кăларса пухма ĕлкĕрчĕ. Çакна хресченсем çĕр-аннемĕре чăн-чăн хуçалла чĕререн юратнипе, хăйсен тивĕçне тĕрĕс ăнланнипе сăлтавламалла пулĕ. Шел те, ку вăл – темиçе процент çеç.**

**Ял халăхне халĕ ĕлĕкхи пек хушса «ур-ра!» кăшкăрашса ĕçлеттереймĕн. Колхоз-совхоз арканнăранпа çĕртен писме тытăннă вăл. Çĕр-аннемĕре чунпа парăнса, юратса ĕçлекен çын сахал. Ăна хисеплесси юна-чуна куçтăр тесен вун-вун çул тăрăшмалла. Çак ĕçе пепке çуралсанах тытăнмалла. Пурнăçра вара урăхларах пулса тухать. Ашшĕ-амăшĕ ачисене: «Хамăр тертленни те çитет, ялта ан нушаланăрах. Хулара вырнаçса çăмăлрах ĕç тупăр», – тет.**

**Çамрăка самантрах е эрне-уйăхрах тăван еншĕн тăрăшма вĕрентеймĕн. Ку – тĕплĕн шухăшласа, ырă тĕслĕхсемпе çирĕплетсе-витерсе кунран-кун, çултан-çул тумалли ĕç. Çавăнпа та, Юрий Алексеевича хуравласа республика ертӳлĕхĕ те йывăр çав вăхăтра мĕнех тăвайнă пулĕччĕ-ши тейĕттĕм.**

**Çакна каласа хăварас килет. Ял çынни халĕ кӳршине те укçа памасăр пулăшасшăн мар. Хушса тӳлемесĕр хире утăм та тумасть. Ку енĕпе пур ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ те хăй тĕллĕн вăй çитереймĕ, çавăнпа та ку ыйтăва Правительство шайĕнче пăхса тухмаллаччĕ, «нимене» хутшăнакансене хавхалантарма субсиди уйăрмаллаччĕ. Вара çухату калăпăшĕ чакатчех. Пĕлетпĕр: нухрат темĕн чухлĕ пулсан та этем ăна çиеймест, çăкăрсăр, çĕр улмисĕр, ытти çимĕçсĕр вара пĕр кун та пурăнаймасть.**

**Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче ял çыннин çĕр лаптăкне пĕрер гектара çитерчĕç. Пурне те кирлехчĕ-ши çавăн чухлĕ? Ватăсем, çемьере вăй питти çын çукран иккĕленнĕрен, тăхтас, кампа та пулин канашлас шухăшлăччĕ. Халĕ хăш-пĕр сĕмсĕр вĕсен пайне харпăрлăха куçарас та сутса пуяс тесе вĕткеленет. Çав вăхăтрах хушма хуçалăха аталантарма лаптăк çитменрен вĕчĕрхенекен те пур. Унашкаллисем çĕре пусă çаврăнăшне йăлтах кĕртсе пĕтерме районсенче ытларах тĕл пулаççĕ. Нумай ял тăрăхĕнчи анасене вара çу кунĕсенче çум курăк пусса илнĕ.**

**Аграрниксен тĕл пулăвĕнче ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов кунашкал лаптăксем республикăра 49 пин гектар йышăннине пĕлтерчĕ. Хуçи çук иккен вĕсен. Кунта пай çĕрĕсем те кĕреççĕ. Ут тытма, ансат техника-мотоблок туянма вăй çитерейменнисем /теприсем укçа çитсен те ăна илмеççĕ/ вĕсене каялла тавăрса параççĕ.**

**Çĕр пурнăç тыткăчи пулнине лайăх ăнланакансем ĕлĕк пуç хума та хатĕр пулнă. Ана пайланă, чикке палăртнă чухне халĕ те хĕрӳ тавлашусем сиксе тухаççĕ. Ырлăхĕпе усă курнă, тупăшне пайланă чухне уйрăмах. Укçа патне шапа та алă тăсать тенешкел, таçтан-муртан «çĕнĕ» хуçасем тупăнаççĕ. Çакнашкал лару-тăру çинчен «Хыпарăн» 3-мĕш номерĕнчи «Çурăк валашка умĕнче...» статьяра тĕплĕн çырса кăтартнăччĕ.**

**Лаптăкра чакаланма юратман, пахча ĕçне мăшăрĕсене шанакан арçын нумайланчĕ. Çавăнпах пулĕ Канаш районĕнчи Уçырмара мотоблокпа хĕрарăмсем усă кураççĕ, ăна ĕçлеттерме пĕлменнисем пĕчĕк суха пуçне йышпа туртса çĕр улми лартаççĕ, вăхăт çитсен – купалаççĕ. Калăн – вăрçă вăхăчĕ.**

**Çĕр улми, пахча çимĕç, ытти культура çитĕнтересси хăйсен тивĕçĕ пулнине манчĕç-ши /хăшĕпĕри сухан та лартмасть, кишĕр те акмасть/ – кĕркунне хулана кайса туянаççĕ. «Колхоз уйĕнче пĕр эрне ĕçленçи тăватăп та – çĕр улмине процент шучĕпе килех килсе параççĕ. Еплерех шултра тата», – тет ялти пĕлĕшĕм.**

**Юлашки çулсенче инвесторсем, усламçăсем ял енне çаврăнса пăхма тытăнчĕç. Йывăрлăх тӳсекен те пур. Николай Адер усламçă та Çĕмĕрле районĕнчи тăван ялĕнче суту-илӳ центрĕ тунă, ял хуçалăх пĕрлешĕвĕ йĕркеленĕ. Влаçрисем хавхалантарман пирки хăй пуçарнă ырă ĕçе малашне аталантарасшăн мар. Çакăн çинчен редакцие кĕрсех пĕлтерчĕ.**

**«Çĕр хăйне тăрăшса тата пĕлсе пăхнине кăмăллать... Çĕрĕн хуçи яланах пулмалла!» – тенĕ ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура.**

**Çапла пултăрччĕ.**

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**




*Кĕтме пĕлекене кĕтмел кукли.*

Ваттисен сăмахĕ.

*Пулать вĕт!*

# Шáпа пӳрнинчен иртеймĕн

### Пурнăç кукăрĕнче

Таня пĕчĕкрех чухне çыравçă пулма, ачасем валли асамлă юмахсем хайлама ĕмĕтленетчĕ. Шкулта вĕренме пуçласан шухăшне улăштарчĕ, шăпăрлансене сиплекен тухтăр пулма тĕллев лартрĕ. Аслă классене куçсан биологи кружокне çырăнчĕ, медицинăпа çыхăннă кĕнекесене çине тăрсах «шĕкĕлчерĕ», энциклопедисене те тишкерчĕ. Ашшĕ-амăшĕ хĕрĕн туртăмне хирĕç каймарĕ, питех те кирлĕ профессие суйланăшăн ырларĕ, ăна тĕрлĕ енлĕ пулăшма тăрăшрĕ.

11-мĕш класра вĕреннĕ чухне Таня мединститутри ятарлă хатĕрлев курсĕн занятийĕсене çӳреме çырăнчĕ.

– Хĕрĕм, сана пулăшма лайăх репетитор тупрăм, – терĕ пĕррехинче ашшĕ. – Çамрăк аспирант вăл, çапах хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, витĕмлĕ ăнлантарать. Паян ăна ĕçтешĕн килĕнче куртăм. Марина Юрьевнăн ывăлĕ те медицина институтне вĕренме кĕме хатĕрленет иккен. Шăпах çак преподавателе суйланă вĕсем, ăна ырă кăмăлĕпе анлă тавра курăмĕшĕн сĕре мухтаççĕ. Эсĕ те ку вĕрентекенпе кăмăллă юласса шанатăп. Вăл сан пата çитес эрнере килме килĕшрĕ.

– Аттеçĕм, Гена лайăх репетитор тупнăшăн чунранах савăнатăп. Анчах ман унпа çыхланас килмест. Алинăпа иксĕмĕр хамăра мĕн кирлине институтри занятисенче те аванах ăса хыватпăр, пире унтах килĕшет. Çакăнпа сирĕн çырлахма тиветех-тĕр, – кун пирки сăмах вĕçленнине систерсе пат! татса каларĕ хĕрĕ.

– Хăвăнне ху пĕлетĕн ĕнтĕ, çапах та кăлăхах хирĕçлетĕн. Ку аспирантăн абитуриенчĕсем экзаменсене ăнăçлă тытса института чиперех вĕренме кĕнĕ пирки эпĕ пĕрре кăна мар илтнĕ, – асăрхаттарчĕ асли.

### Чи чаплă лектор

Хĕр тантăшсен вĕçĕм кĕнекепе ларни харама каймарĕ, мединститута иккĕшĕ те вĕренме кĕчĕç, анчах расна факультета: Таня хăй ĕмĕтленнĕ пек педиатр пулма хатĕрленчĕ, Алина вара хирурги уйрăмне суйларĕ. Пушă вăхăт юлманнипе юлташсем тăтăшах курнăçаймарĕç, çавăнпа пĕр-пĕрне каласа памалли пухăнсах пычĕ. Пĕррехинче киле таврăннă чухне транспорт чарăнăвĕнче тĕл пулсан тинех сăмах çăмхи сӳтме май килчĕ.

– Пĕлетĕн-и, пирĕн генетика лекцийĕсене халĕ урăх преподаватель вулать, – çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарма васкарĕ тусĕ. – Питĕ лайăх вĕрентет, тем те пĕр пĕлет. Вăл каласа панисене урăх нимĕнле кĕнекере те тупса вулаймăн. Хăй питĕ çамрăк пулин те анлă тавра курăмĕпе кашнинех тĕлĕнтерет. Хăйĕн ĕçне чăннипех те чунран парăннă çын темелле. Сăн-пичĕпе кĕлетки тĕлĕшĕнчен те хурлаймăн. Пирĕн ушкăнри хĕрсем уншăн канăça çухатрĕç ĕнтĕ, кашниех хăйĕн çине пăхтарма, кăмăлне çавăрма ĕмĕтленет. Анчах вăл нимĕн те асăрхамасть тейĕн, никама та çывăха ямасть. Хăй авланман-ха. Ахăртнех, савнă пики пурахтăр. Ăнать вĕт хăшĕ-пĕрне. Эсĕ те пырса унăн лекцийĕсене итлеме пултаратăн, вăл пирĕнпе юн кун тĕл пулать, вун икĕ сехетре. Сан ун чухне заняти çук вĕт, эппин, пĕрремĕш аудиторие кил, эпĕ вырăн йышăнса хуратăп, – пĕр чарăнми чĕвĕлтетрĕ савăк кăмăллă Алина.

– Тусăм, йăнăшатăн. Пирĕн расписание иртнĕ эрнере улăштарчĕç çав. Юн кунсерен халĕ коллоквиум пулать, вăл икĕ сехетре çеç вĕçленет. Çавăнпа та эсĕ асăннă пултаруллă вĕрентекенĕн лекцийĕсене эпĕ ĕлкĕрейместĕпех. Шел, паллах, сирĕн чипер каччăна, çамрăк ăсчаха манăн та питĕ курас килетчĕ, – хурланнă пек калаçрĕ çулташĕ тусĕпе сыв пуллашнă май.

### Ăслăлăх статйине пула...

Ачаранах сочинени çырма юратнă Таньăна тăваттăмĕш курса çитсен мединститут хаçачĕн редакторĕ пулма шанчĕç. Хĕр тантăшĕсен кăмăлне хирĕç каяймарĕ. Тахçан ача-пăча юмахĕсем хайлама ăста пулнă халапçăн аллинче медицинăпа çыхăннă текстсем те çăмăллăнах çырăнчĕç. Çĕнĕ ĕçре чăн киленӳ тупрĕ хĕр. Уйăхсерен пичетленсе тухакан кăларăм валли вăл ăслăлăх статйисем çеç мар, институт пурнăçĕпе паллаштаракан репортажсемпе интервьюсем те хатĕрлерĕ, сăвăсем те шăрçаларĕ. Тепĕр чухне ытти студент та хаçат ĕçне хастар хутшăнчĕ, вĕрентекенĕсем те айккинче юлмарĕç. Пĕррехинче пĕр преподавателĕ редактор патне электрон почтăпа питĕ вăрăм статья ярса пачĕ. Таня хаçат калăпăшĕ пĕчĕкрех пулнăран ку материала кĕскетме шухăшларĕ. Анчах хăй тĕллĕнех ку ĕçе пикенме тăхтарĕ. Статьяра автор хăй тунă тĕпчевсен пĕтĕмлетĕвĕсене те туллин кăтартнă, темăна тĕплĕ çутатнă. Çавăнпа ăна кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте туртса пăрахма хăрарĕ, çивĕч ăс-тăнлă вĕрентекене кӳрентерес мар тесе хăйне редакцие килме чĕнчĕ, хăш-пĕр абзаца кĕскетме ыйтрĕ.

Пысăк калăпăшлă та паянхи медицинăшăн пĕлтерĕшлĕ çак ăслăлăх ĕçне самаях çулланнă профессор пурнăçланă пулĕ тесе шухăшланăччĕ хĕр. Редакцие хăйĕн пекех çамрăк та калаçма ӳркенмен чипер каччă пырса кĕрсен Таня сĕре тĕлĕнчĕ. Вĕсем çăмăллăнах пĕр чĕлхе тупрĕç. Игорь малашне хаçат валли çĕнĕ статьясем хатĕрлеме те пулăшма шантарчĕ. Хăйĕн сăмахне çилпе вĕçтермерĕ вăл. Кĕçех иккĕшĕ те хăйсене пĕрлехи ĕç кăна çыхăнтарманнине ăнкарчĕç. Çывăх туслашнăскерсем тăтăшах тĕл пулма пуçларĕç. Тепĕр уйăхранах аслă шкулта вĕсем пирки пăшăл пătти «пĕçерме» тытăнчĕç, хĕрпе каччăна вăрттăн çураçтарчĕç тесен те йăнăш мар.

### ...Çулĕсем пĕрлешрĕç

Пĕррехинче хăйĕн тусĕ институтри чи чаплă преподавательпе кафере ларнине Алина та асăрхарĕ.

– Ну, Таня, тĕрĕссине кала-ха: пирĕн Игорь Егоровича мĕнле майпа çавăрма пултартăн? Хăйĕн хыççăн пĕр ушкăн хĕр чупнине пăхмасăр шăпах сана суйланă-çке вăл, – тĕпчерĕ пулас хирург черетлĕ тĕл пулура. – Эпĕ тахçан сана унăн лекцийĕсене пырса итлеме сĕннĕччĕ. Эсĕ вара хăв тĕллĕнех, манран вăрттăн, юрату романĕ хайлама тытăннă иккен. Ну, тĕлĕнтертĕн. Санран кун пеккине кĕтменччĕ, – çиллененçи пулчĕ тантăшĕ.

Анчах чи пысăк тĕлĕнтермĕшĕ кайран, юлашки курсра вĕреннĕ май диплом ĕçне çырнă вăхăтра, пулчĕ. Общежитире пĕрле пурăнакан тусĕсем Çветтуй Татиана кунне паллă тума тухса кайсан Таня ача-пăча чирĕсем пирки тĕплĕнрех вуласа пĕлес тĕллевпе библиотекăна çул тытрĕ. Çавăн чухне хăйĕн уявĕ çинчен мансах кĕнеке купинче ăшталанса ларакан хĕр умне Игорь пысăк чечек çыххипе килсе тăчĕ те кĕсйинчен ылтăн çĕрĕ кăларса савнине качча тухма ыйтрĕ. Вулавăш пӳлĕмĕнче юлнă студентсем çакна асăрхамасăр юлмарĕç-ха, Таня вĕсенчен вăтанса пуçне пĕкрĕ, малтанах нимĕн калама аптрарĕ. Ку вăхăт тĕлне иккĕшĕ те пĕр-пĕринсĕр пурăнайманнине ăнкарса илнĕччĕ ĕнтĕ. Çавăнпа пулас педиатр савнийĕпе туй кĕрекине ларма пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ. Çав кунах ăна ашшĕ-амăшĕпе паллаштарас тĕллевпе хăнана чĕнчĕ.

Пĕр-пĕрне чунран савакан хĕрпе каччă йăл-йăл кулса килсе кĕрсен Таньăн ашшĕ пулас кĕрĕвне ыталасах илчĕ. Тахçан шкулта вĕреннĕ чухне хĕрне шăпах çак преподательпе пĕрле экзаменсене хатĕрлентересшĕн пулнă-çке вăл. Анчах ун чухне вĕсене паллаштарма та май килмерĕ. Çапах çамрăксен çулĕсем хĕресленнĕ иккен. Халĕ акă пĕрлешес шанăç та пур. Турă çырнинчен иртеймĕн çав.

■ Лина МĂКĂНЬ



### СăмАХ каламаллАХ:

***Пурнăçри тĕллевсене пĕчченех пурнăçлама ăнтăлни чăннипех те мухтава тивĕçлĕ. Çапах та ăраскал ума кăларса тăратакан вăрттăн паллăсене те вулама вĕренмелле, йĕри-тавра пулса иртнине тĕплĕ тишкерме пĕлмелле. Çапла майпа пурнăçа ырă енне улăштарма тивĕçлĕ пулăмсене хăвăртлатма меллĕрех-çке. Телее, пурнăç хăех чаршавне уçса йăлтах кăтартать, пĕрле пулмалли çынсен çул-йĕрне пĕр-пĕрин патне çавăрса çитеретех.***

*Шăпа*

# Ятлá çынна ял савать



● *Перасковья Захарова мăнукĕпе.*

«Çĕр çинче çĕр çул пурăнасчĕ», – такмакланă ваттисем. Çĕрпӳ районĕнчи Хурамал Туçа ялĕнчи Перасковья Захарова кĕçех 95 çул тултарать. Турра шĕкĕр, хăйне аванах туять-ха вăл. «Атте, Захар Терентьев 70 çул пурăнчĕ, анне Екатерина Афанасьева утмăла çитсен вилчĕ. Эпĕ вĕсенчен иттертĕм. Çакăн чухлĕ пурăнатăп тесе шухăшламан та»,– тет вăл халапласа ларнă май.

Перасковья Захаровна Куславкка районĕнчи Чăрăшкасси ялĕнче 5 ачаллă хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ачалăхĕ туслă кил-йышра иртнĕ. Килĕштерсе, шăкăл-шăкăл пурăнакан çемьере мĕн пĕчĕкрен ачасене ĕçлеме, алă ĕçне хăнăхтарса пынă. 6-7 çулта чухне аппăшĕпиччĕшĕпе пĕрле ашшĕ-амăшне килти ĕççене тума пулăшнă. Хĕллехи вăрăм каçсенче çăм чавнă, çип арланă, алсиш-нуски çыхнă. 10-12 çулта чухне кăмака хутма, апат пĕçерме, пир тĕртме, кĕпе çĕлеме, ĕне сума, утă çулма, çурлапа тырă вырма тата кил таврашĕнчи ытти ĕçе те тума пĕлнĕ. Арçын ачасемпе танах çăпата хуçма вĕреннĕ. Пĕве кĕрсен тантăшĕсемпе пĕрле улах ларнă. Хĕрсем унта тĕрленĕ, сӳс арланă, шăтăкла çыхнă. Ĕçлес кăмăл-туртăм яланах пысăк пулнине палăртать Пăраски кинемей.

Перасковья Захаровнăн çамрăклăхĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче иртнĕ. «Уйра викăпа хутăш сĕлĕ улăмне пуçтаратпăр. Кăнтăрла тĕлнелле ялтан çынсем хашкаса чупса килчĕç, «Вăрçă тухнă!» тесе пĕлтерчĕç. Хăрушă хыпар пурне те хăратса пăрахрĕ. Тӳрех ĕçе пăрахрăмăр та канма лартăмăр. Хамăр макăратпăр. «Паян урăх ĕçлеместпĕр, киле кайăр»,– терĕç. Тепĕр кунне ирех арçынсене вăрçа илсе кайма пуçларĕç. Ялта унта-кунта салтаксен хурлăхлă юрри илтĕнет. Кашни кун тенĕ пек çул çитнĕ 4-5 качча çар комиссариатне лавпа ăсатаççĕ. Ял хуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕç хĕрарăмсем çине тиенчĕ. Уй-хир ĕçĕсене вата-вĕтĕпе пĕрле тума пуçларăмăр. Колхоз лашисене те вăрçа иле-иле кайрĕç. Кĕçех вăкăр кӳлме тытăнтăмăр. Вĕсене ĕçе аран-аран хăнăхтаркаларăмăр. 1941 çулта пиччен Кирилăн та вăрçа кайма ят тухрĕ. Вăл танкист пулнă. Хаяр пĕр çапăçура чĕр куççирен йывăр аманса 6 уйăх Саранск хулинче госпитальте выртнă. Кун пирки вăл пире çырупа пĕлтернĕччĕ. Сывалса çитеймесĕрех пиччене вăрçа тепĕр хут ăсатнă иккен. Пĕрле кайнисенчен Кирилл Смоленск облаçĕнчи Ситчев районĕнче хыпарсăр çухални пирки хут килнĕччĕ. Аппан упăшки Иван вăрçăра тыткăна лекнĕ пулнă. Тыткăнри пурнăç пирки каласа памастчĕ, анчах кăшт ĕççен концлагерьте хĕлле чĕрĕ кăшман çинине макăра-макăра аса илетчĕ. Чăрăшкассинчен хĕрсем те вăрçа кайнă. Нина йывăр çын пулса таврăнчĕ. Вăрçă йывăрлăхĕсене халăхпа пĕрле чăтса иртертĕмĕр. 1941 çулăн раштав уйăхĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чăнкасси, Чĕнер ялĕсем патĕнче шартлама сивĕре окоп чаврăмăр. Киле килсен кăшт кăна кантăмăр, пире Йĕпреç районĕнчи Буинск тăрăхне вăрман касма илсе кайрĕç. Вăрçă валли вутă хатĕрлеме çăпата сырнă нумай хĕр-упраçа пухнă-мĕн кунта. Хĕлĕпех вăрăм пăчкăпа вăрман касрăмăр. Каснă вутта машинăсем çине алă вĕççĕн тиеттĕмĕр. Ир тăрса каçченех ĕçлеттĕмĕр. «Ĕçлемелле, фронтра салтаксене тата йывăртарах»,– тетчĕç. Килтен пĕçерсе пынă çĕр улмирен /вăл килтен илсе килнĕ чухне сивĕпе шăнатчĕ/ яшка янтăлаттăмăр. Малтан пĕр тапхăр Йĕпреçре хваттерте пурăнтăмăр, кайран барака куçарчĕç. Икĕ хутлă нар çинче çывăраттăмăр. Баракра çĕр урайччĕ, тимĕр кăмакана çĕрĕпех çунтараттăмăр. Вутне дежурнăй хурса ларатчĕ, унăн çывăрма юрамастчĕ. Кĕрт тăрăх ашса çӳренипе йĕпеннĕ кĕпе-тумтире каçхине баракра типĕтеттĕмĕр. Çуркунне тин киле таврăнаттăмăр», – аса илет иртнĕ вăхăта кинемей.

Выçăпа, сивĕпе асапланнă пулсан та нăйкăшман вăл, çĕнтерĕве çывхартас тесе ырми-канми ĕçленĕ. Йывăр пулин те чун хавалне çухатман, мал ĕмĕтпе пурăннă. Перасковья Захарова 1947 çулта Çĕрпӳ районĕнчи Хурамал Туçари Лукиян Никифорова качча тухнă. Вăл та вăрçă асапĕ витĕр тухнă. Лукиянăн малтанхи арăмĕ Анфиса 1944 çулта Кăнар вăрманне çапă касма кайсан Армас уйĕнче шăнса вилнĕ. Икĕ ача тăлăха юлнă. Перасковья вĕсене хăйĕн «çунатти» айне илнĕ. Çемьене кĕçех тепĕр виçĕ пепке хушăннă. Çапла, пурĕ 5 ача пăхса ӳстернĕ мăшăр. Пысăк çемьере килĕшӳ, çураçу, туслăх хуçаланнă. Шел, телейлĕ мăшăра ватлăха пĕрле кĕтсе илме пӳрмен. Чире пула Лукиян 1959 çулта пурнăçран уйрăлнă.

Перасковья Захарова тивĕçлĕ канăва тухиччен колхоз правленийĕнче тирпейлӳçĕре ĕçленĕ. Ăна «1941-1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн», «Ĕç ветеранĕ» тата ытти медальпе чысланă. Хулара пурăнма кăмăлламасть Пăраски кинемей. «Унта чуна тăвăр. Ялта – ирĕк, уçă сывлăш, шыв тутлă, халăхĕ кăмăллă», – тет. Тунсăх ан пустăр тесе 4 чăхпа автан, кушак усрать. Вăл хĕлле çăм чавать, кĕнчеле арлать, алсиш-нуски çыхать. Çулла çум çумлать, утă тавăрать. Перасковья Захаровна ачисене те ĕçе юратма, тирпейлĕ, сăпайлă, ырă кăмăллă пулма вĕрентсе ӳстернĕ. Аслă хĕрĕ Саня Украинăра пурăнать. Тивĕçлĕ канура пулсан та общежитире вахтерта вăй хурать. Ывăлĕсем Геронтипе Геннадий учительте ĕçлеççĕ. Çулла ялта пурăнаççĕ, амăшне пулăшаççĕ. Халĕ Пăраски кинемейĕн 10 мăнук, 9 кĕçĕн мăнук. Ĕçпе пиçĕхнĕ хĕрарăм – ялта чи ватти, чи хисеплĕ. Вăл пуриншĕн те ырă тĕслĕх. «Ятлă çынна ял савать»,– теççĕ. Чăнах та, Хурамал халăхĕ ăна сума сăвать. Вăл хăй те кирек кампа та ăшă, шăкăл-шăкăл, вашават. Хăйне ырă сунакансене: «Ман пекех ватăличченех пурăнăр»,– тесе пиллет.

■ Геронтий НИКИФОРОВ

*Ăраскал*

# Каçаре́-ши Максим?



***Ачалăхĕ те, яшлăхĕ те аван килчĕç Максимăн. Ашшĕ предпринимательте ĕçленĕрен çуклăхпа нушаланман. Шкул хыççăн çамрăк тĕп хулари пĕр аслă шкулта экономиста вĕренчĕ. Диплом илнĕ хыççăн тăван тăрăхах таврăнчĕ. Ашшĕпе пĕрле ĕçлеме пуçларĕ. Ялти пĕлӳ çурчĕнче вăй хуракан амăшĕ те май килнĕ таран хавхалантарса пычĕ çывăх çыннисене. Нухратлă йĕкĕтпе хĕрсем те туслашасшăн пулни палăрчĕ. Пĕри те тепри ăна меслет тупса клуба чĕнчĕ. Анчах ялти пикесемпе вăхăта ирттермелле тенĕ пек кăна çӳрерĕ.***

Акатуйра вара вăл Трак тăрăхĕнчен тăванĕсем патне хăнана килнĕ Ленăпа паллашрĕ. Хăюллă хĕр-упраç Шупашкарта юристра ĕçлетмĕн, ют çĕр-шывра кăларнă çăмăл машинăпа çӳрет. «Хăй те маттур, ахăртнех ашшĕ-амăшĕ те пысăк çынсем. Унпа тăванлашма та намăс мар, вĕçертес марччĕ ăна», – шухăшларĕ Максим. Акатуйра хĕре вăл шашлăкпа сăйларĕ, телефон номерне те ыйтма манмарĕ. Пĕр-пĕрин патне шăнкăравласах тăчĕç вĕсем. Канмалли кунсенче яш хăйĕн тимĕр урхамахĕпе Шупашкара кайса килетчĕ. Максимпа Лена театра, чăваш эстрада юрăçисен концерчĕсене тăтăш çӳретчĕç. Туслăх майĕпен юратăва та куçрĕ. Çулталăкран йĕкĕт пикене мăшăрĕ пулма ыйтрĕ. Лена турткалашмарĕ, анчах яла куçса каясси пăшăрхантарчĕ ăна. Ĕç вырăнĕ пирки те пуç ватрĕ. «Иккĕн пĕрле ĕçлĕпĕр. Каярах, тен, экономиста та вĕренĕн. Хамăрăн ĕç-хĕле шута илсе пыракан бухгалтер кирлех», – терĕ Максим. Çулла чаплă туй тусах пĕрлешрĕç çамрăксем. Ашшĕпе амăшĕ пĕртен пĕр ывăлне: «Уйрăлса тухса ĕлкĕретĕн-ха, пĕрлех пурăнар», – тесе ӳкĕте кĕртрĕ. «Çĕнĕ çын» упăшкипе пĕрле ĕçлеме пуçларĕ. Килте те пĕрле, ĕçре те юнашар. Ашшĕ те хĕпĕртет ĕç ăнса пынăшăн. «Май пур чухне лайăх, ытлă-çитлĕ пурăнмалла»,– тет вăл.

5 теçетке çула хыçа хăварнă Гена /Максимăн ашшĕ/ халĕ те шукăль тăхăнса çӳрет, сывă пурнăç йĕркине пăхăнать, хăйне пăхать. Çавăнпах-тăр хăйĕн çулĕнчен чылай çамрăк курăнать. Япшар чĕлхеллĕскере хĕрарăмсем те саваççĕ. Паянхи хĕрсем хăйсенчен чылай çул аслисене те тиркемеççĕ. Чи кирли – укçа пултăр. Çамрăк хĕрарăмсем те нухратшăнах ĕçекен упăшкисенчен уйрăлса аслисемпе çемье çавăраççĕ. Гена та чиперуксемпе йăкăлйăкăл тума хирĕç мар. Хăйĕн вăхăтĕнчисем кăсăклантармаççĕ ăна, çамрăккисем, илĕртӳллисем чĕрине çунтараççĕ. Чăп-чăмăр кĕлеткеллĕ, нăкă кăкăрлă кинĕпе те тăтăш шӳтлет вăл. Ывăлĕ ĕç пирки район центрне кайнă чухне Ленăна шăккалатпа сăйлать. «Ватă çерçие» хывăхпа улталаймăн çав, хĕрхĕрарăмпа тимлĕ пулма пĕлет вăл. Вĕсен чун-чĕрине сарă çу пек епле ирĕлтермеллине те чухлать.

Ленука юлашки вăхăтра упăшки кăнттамрах, хытăрах пек туйăнма пуçларĕ. Пĕрлешсенех ялан парне, чечек паратчĕ... Халĕ вара: «Хăвна епле туятăн?» – тесе ыйтми те пулчĕ. Ялан ĕç, укçа пирки кăна сăмахлать. Вĕсем пирки кăна шухăшласан ухмаха тухма та пулать.

Пĕррехинче, ĕçпе ирех Шупашкара кайсан, Максим килне палăртнинчен маларах çитрĕ. Çул çинче апат çиме ятарласа чарăнманран хырăм выççине туйса тӳрех килне вĕçтерчĕ. «Ха, аттепе арăм та килтех иккен», – хĕпĕртерĕ çамрăк арçын ашшĕн машинине асăрхаса. Çурта хыпаланса чупса кĕчĕ те ... тăп! чарăнчĕ. Савнă арăмĕпе юратнă ашшĕ чуп туса тăраççĕ! Пушă пулманран кил умне машина чарăннине те сисеймен пулас апăршасем. Кĕтменлĕх вĕсене те минретсе ячĕ пулас, пĕр сăмах та чĕнеймерĕç. «Ленăна преми пек пултăр тесе ылтăн вăчăра парнелерĕм... Юлташла кăна чуп турĕ вăл мана»,– маларах тăна кĕчĕ ашшĕ. Лена вара сăмах чĕнмесĕрех чупса тухса кайрĕ. Максим унăн мăйĕнче йăлтăртатакан хулăн вăчăрана курса юлма ĕлкĕрчĕ. Генăна, паллах, вĕрентекенре ĕçлекен арăмĕ каçарĕ. Ун пеккине халĕччен хăнăхкаланă ĕнтĕ вăл. Анчах мăшăрĕпе ашшĕне Максим каçарĕ-ши? «Çамрăксен уйрăм пурăнмалла»,– тени тĕрĕсех çав...

■ Наталья М.

Елчĕк районĕ

*Психолог сĕнĕвĕ*

# Хáнáху талхáре́

**«Сывă-и, юратнă хаçат? Çемьери лару-тăру манăн кăмăла хуçать. Эпĕ качча тухнăранпа çулталăк иртрĕ. Сергейпе паллашнăранпа вара виçĕ çул çитрĕ. Мăшăрăм – çирĕм тăххărта, эпĕ вара 27-ре. Хальлĕхе ача çук-ха. Эпир мăшăрăмпа тĕрлĕ сăлтава пула кашни кунах хирĕçетпĕр. Упăшкан кашни сăмахĕ чĕрене ыраттарать. Унăн асăрхаттарăвĕсем пĕрре те килĕшмеççĕ. Тепĕр чухне вăл мана чăнласах килĕштерет-ши тесе те шухăшлатăп. Манăн ĕç укçи – вăтам. Ку та упăшкан кăмăлне килмест, ытларах илмелле тет. Хăйĕн шалăвĕ, чăнах та, манăннинчен пысăкрах. Сăмах май, хăйĕн укçине мана памасть вăл. Кашни харпăр хăйĕн нухрачĕпе пурăнатпăр. Сергей килти ĕççене тума та пулăшмасть. Çапла пурăнса ывăнтăм. Канас, хама шеллеттерес килет. Çак тапхăрта вăл мана нимĕнле парнепе те савăнтармарĕ. Ачашлăхпа тимлĕх пирки каламастăп та. Хушăран çĕрлене юлса таврăнать. Мана нимĕн те каласа памасть, эпĕ уншăн ют çын тейĕн. Ирĕксĕрех хама ыттисенчен начартарах пек туйма пуçларăм. Ача çурални те улăштармĕ-ши упăшкана?**

**Юля Г.**

Канаш хули.»

Юля, пĕр-пĕрне хăнăхмалли тапхăр пырать халĕ сирĕн. Туй хыççăнхи çул чылайăшĕшĕн йывăртарах килет. Мăшăрăрпа чуна уçса калаçма тăрăшăр, кайран кая юлатăр. Пĕр-пĕринчен ытларах та сивĕнме пултаратăр. Ан манăр, эсир хăвăрах суйланă-çке ăна. Хĕрпе каччă пек çӳренĕ чухне эсир ăна «чи лайăххи» пек йышăннă. Ăна, чаплăскерне, çухатас мар тесе пур енĕпе те юрама тăрăшнă. Ку вара Сергее питĕ килĕшнĕ. Йăлăхтарса çитерсен вара эсир ăна «пьедестал» çинчен антарнă. Çакăн хыççăн вара вăл та улшăннă. Упăшкăр хăйне сиввĕнрех тыткалама тытăннă. Тен, кураймалăх та çуралнă. Кун пек чухне татăклă утăм тумаллах. Хăвăра юратнине тата хисепленине кăтартăр. Хăвăр интерессене, хĕр тусăрсене аса илĕр. Тĕл пулу каçĕсене кайăр, Сергее пăхăнманнине кăтартăр. Ахăртнех, вăл эсир урăх арçын тупма пултарасси пирки шухăшласа илĕ. Анчах хăвăра питĕ ирĕклĕ тытни ăна шухăша ямарĕ тĕк – апла эсир ăна кирлĕ мар. Апла тăк пĕр вырăнта ан тăрăр, ларутăрăва уçăмлатăр.

# Манаúмастáп...

**«Эпĕ 25 çулта. Авланнă арçынпа ултă çул тĕл пулатăп. Маларах эпир ĕçтешсем пулнă. Халĕ эпĕ урăх ĕçе куçнă /тĕп бухгалтерта ĕçлетĕп/. Апла пулин те курнăçма пăрахман. Гена манран 15 çул аслă. Эпĕ ăна питĕ юрататăп. Вăл та мана савать. Унăн икĕ ача. Вĕсемпе Генăн амăшĕ те пĕрлех пурăнать. Гена: «Арăма кăмăлламастăп, унпа çывăрмастăп»,– тет. Генăн мăшăрĕ ман пирки пĕлет, тăтăшах ман патăма шăнкăравлать. Тĕрĕссине пĕлесшĕн вăл. Эпĕ вара: «Пирĕн хушăра нимĕн те çук», – тетĕп. Мĕншĕн манăн каламалла, туйăмсем пирки упăшкинчен ыйттăр. Эпĕ ăнланатăп: вăл çемйине пăрахас çук. Кун пирки сăмах пуçарсан: «Ăçта кайăп ĕнтĕ эпĕ, çитменнине – аннепе», – тет. Анчах та пире юратупа савăшу кăна пĕрлештермест. Эпир пĕр-пĕрне йывăр лару-тăрура пулăшатпăр, сĕнӳ-канаш паратпăр, хаклатпăр, шанатпăр. Вăл нихăçан та кун пек юратман тет. Эпĕ ăна 100 проценчĕпех ĕненетĕп. Паллах, ачисене ытларах юратать вăл. Кунпа мăнаçланатăп. Ăна манма тархасшăн пулăшсамăр. Тĕрĕс çул çине епле тăмалла-ши? Нумаях пулмасть эпир хирĕçрĕмĕр, тен, мирлешмелле те мар?**

**Ирина К.**

Шупашкар районĕ.»

«100 процентчĕпех ĕненетĕп» тетĕр-ха та, Ирина, анчах хăв пирки те çапла çирĕплетейместĕр те çын пирки епле калăн? «Ачисене ытларах юратать», – тетĕр тата. Кама ытларах савать? Ачасене юратнипе хĕрарăма кăмăллани – расна туйăмсем. Генăпа арăмĕ хушшинчи хутшăнусем пирки те ан ĕненĕр. Паллах, пĕр-пĕрне савма пăрахман вĕсем. Арçын юратман хĕрарăмпа пурăнмасть. Ăна кăмăлламан тăк – пĕр кун та тăмастчĕ. Хваттер çуккине те пăхмастчĕ. Енчен те Генăн арăмĕ сирĕн пата шăнкăравлать тĕк, апла вăл юратăвне упраса хăварасшăн. Мăшăрĕ те çапла тума чармасть ăна. Эсир ăна çемье пурнăçĕнчи кичемлĕхе сирме пулăшатăр – çавă çеç. Çавăнпа пуçа ытлашши каçăртма кирлĕ мар. Тĕрĕслĕхе йышăнма вăхăт мар-ши?

**Ыйтусене Елена Алексеева психолог хуравланă.**

**Страницăна Роза ВЛАСОВА хатĕрленĕ.**

